Суйлав

# Ăçта сасăламалла?

Енчен те эсир сентябрĕн 17, 18 тата 19-мĕшĕсенче хăвăра регистрациленĕ вырăнта пулмастăр пулсан, хăвăр ăçта пулатăр, çавăнта та сасăлама май пулать. Ку енĕпе сире «Мобильный избиратель» механизм пулăшма пултарĕ.

Августăн 2-мĕшĕнчен тытăнса çынсенчен хăйсем ăçта пуласси кура сасăлама заявлени йышăнмалли пунктсем ĕçлеме тытăннă. Вĕсем сентябрĕн 13-мĕшĕччен ĕçлеççĕ.

«Çын хăй пурăнакан вырăнта пулмасть пулсан та, унăн кирек ăçта та сасăлама пулать – урăх ялта, хулара е урăх регионта. Çынсенчен урăх вырăнта сасăлама заявлени йышăнассипе пирĕн патра территори суйлав комиссийĕсем, нумай функциллĕ центрсем тата патшалăх услугисен пĕрлехи порталĕ ĕçлеççĕ», – ăнлантарса парать Чăваш Ен Тĕп суйлав комиссийĕн секретарĕ Олег Ефимов.

Урăх адреспа сасăлама заявлени пама виçĕ май пур:

1. Патшалăх услугисен порталĕ урлă (заявление электрон мелпе памалла).
2. Çывăхри нумай функциллĕ центра.
3. Территори суйлав комиссийĕнче (вăл район е хула администрацийĕнче вырнаçнă). Сентябрĕн 8-мĕшĕнчен заявление участокри суйлав комиссийĕнче те йышăнĕç.

Заявлени парассин мелне суйлавçă хăй суйласа илет. Ăçта сасăлассине сентябрĕн 13-мĕшĕччен уçăмлатмалла.

Редакци почтинчен

# Ĕç çынна усала вĕрентмест

Шкул ачисемпе тăван ялăн, савнă ялăн урамĕсемпе çӳрчĕсем кăна мар, пĕвисемпе уличе те тирпейлĕ пулччăр тесе тăрăшрăмăр. Пĕвери шыва ĕнесем кĕмелле турăмăр, хур-кăвакалĕ те темрен ан çаклантăр терĕмĕр, пулă тытма юратакансене те ĕç хыççăн канма лайăх услови пултăр. Пĕвери йывăç турачĕсене, пĕренесене, тĕрлĕ тасамарлăха пуçтарса кăлартăмăр. Пысăккисене кăларма вара пирĕн вăй çитеймерĕ. Пустуях çĕрсе выртаççĕ вĕсем унта, шывне те тасамарлантараççĕ. Пĕве тасатма хутшăннă тăрăшуллă ачасене ятран асăнса хăваратăп: Митя, Антон, Сергей, Егор, Степа Петровсем, Артемпа Кирилл Беловсем, Кирилл Петров. Пирĕн таврара вăйпитти пĕр çын та çук пек туйăнать е вĕсем çав тери ĕçчен – чĕнсен те тухмарĕç.

Тавралла пăхар-ха, мĕнле илемлĕ, унăн çынсем тăрăшаççĕ – тирпейлĕх хăйне хăй пулмасть. Уличере тирпейлени те питĕ кирлĕ. Астăватăп инкесем пиçен таккатчĕç, вĕлтĕрен çулатчĕç. «Кин, кил пирĕн йыша», – терĕç мана, çĕнĕ çынна.

Унтанпа 39 çул çитрĕ. Хăнăхнă ĕçе пăрахăçлас килмест. Ку пĕтĕмпех çак ял çыннисене хисеплени, хам енчен пулăшни, тавралăха илемлетни тесе шухăшлатăп эпĕ. Хăшĕсем çакăн йышши ĕçе курмаççĕ, теприсем юриех курмăш пулаççĕ, виççĕмĕшĕсем вара тăрăхлама пăхаççĕ, килĕштермесĕр пăхаççĕ.

Эпир çитĕннĕ вăхăтра шкула кайиччен тырă вырнă чухне колхоз уйне мăнакисене валли ватă апи турăх, кукăль çĕклеттерсе яратчĕ. 8 çула çитсен çурла тытма хăнăхрăм, пĕчĕккĕн вырма та вĕрентĕм. Каярах пахчари çĕр улми тунисене çуррине пĕччĕнех купаларăм. Мăнаки пире уйри ĕçпе пиçĕхтерме хăнăхтарчĕ. Вăл пире тырă вырса пĕтерсенех пăрахутпа Шупашкара каятпăр, мороженăй илетпĕр тетчĕ, киле валли кукăль, шушкă, кăлпасси туянатчĕ. Çавăн пек хавхалантаратчĕ вăл пире тăрăшса ĕçленĕшĕн. Тавах пире çапла ĕç çумне ачаран хăнăхтарса пынăшăн.

**П. НИКИФОРОВА.**

Ситуккасси ялĕ.

«Наци проекчĕсем – Муркаш районĕнче»

# Культура çурчĕ те, ФАП та, çул та

***Хальхи вăхăтра пирĕн çĕршывра 12 наци проекчĕ пурнăçа кĕрет. Вĕсен шайĕнче туса хатĕрленĕ вуншар регион проекчĕпе тата патшалăх программипе те ĕçсем калăпăшлă пулса пыраççĕ. Пирĕн район та наци проекчĕсене анлăн хутшăнать. Вĕсен шайĕнче юлашки çулсенче пирĕн пурнăçра пулса иртекен улшăнусене пурте лайăх курса тăратпăр. Ярапайкасси ял тăрăхĕнче вара кăçал харăсах 3 наци проекчĕпе пăхнă ĕçсене туса ирттереççĕ: Ярапайкассинче çĕнĕ Культура çурчĕ çĕкленет, Шурчара çĕнĕ ФАП хута каять, «Волга» – Вăрăмой» автомобиль çулне юсаса нормативлă шая çитереççĕ.***



**«Культура» наци проекчĕ** шайĕнче пĕлтĕр пирĕн районта Мăн Сĕнтĕр ялĕнче тĕслĕх библиотека (республикипе те иккĕ кăна) хута яма май килнĕччĕ. Кăçал вара унăн шайĕнче Ярапайкассинче çĕнĕ Культура çурчĕ çĕкленет **(2-мĕш сăн ӳкерчĕкре)**.

Ярапайкассинче çĕнĕ Культура çурчĕ çĕклессин ыйтăвĕ пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ çивĕч тăнăччĕ. Ку тăрăхра пурăнакансен çынсене канăç паман ыйтăва «Культура» наци проекчĕ шайĕнче тинех татса пама май килет.

Çĕнĕ культура учрежденийĕ 150 вырăнлă пулать. Строительство ĕçĕсене туса ирттерме 33,3 млн ытла тенкĕ уйăрнă. Ĕçсене чикĕллĕ яваплăхлă «СТРОЙКРАФТ» общество пурнăçлать. Ĕçсене пурнăçлама контракта мартăн 9-мĕшĕнче тунă. Строительсем хыççăнах çĕр ĕçĕсене пурнăçлама тытăннă. Инженерипе коммуникаци сечĕсене хурса хăварнă ĕнтĕ, халĕ строительсем çĕнĕ Культура çурчĕн стенисене хăпартассипе ĕçлеççĕ. Пушар резервуарĕ валли монолит никĕс хывнă, резервуара вырнаçтарнă. Тулашри канализацие те йĕркелесе çитернĕ.

Кунта халĕ стенасене купаланă çĕрте куллен 11 каменщик вăй хурать. Строительсем çывăх вăхăтрах стенасене купаласа пĕтерме, çурт çивиттне тăвас ĕçсене тытăнма шантараççĕ. Çавна валли тимĕр конструкцисене, сэндвич-панельсене кӳрсе хунă ĕнтĕ.



Шалти ĕçсене туса ирттерме субподряд мелĕпе урăх организацие явăçтарма палăртаççĕ. Контрактпа пăхнă тăрăх, объекта строительсен кăçалхи октябрь уйăхĕнче туса пĕтермелле. Строительство организацийĕ мĕнпур ĕçе ку вăхăта вĕçлеме шантарать.

Çĕнĕ культура учрежденине çĕнĕ оборудованипе, çĕнĕ сцена çипуçĕпе тивĕçтерессине те пăхса хунă. Компьютер оборудованине, креслосене, сцена çипуçĕпе костюмсене район бюджечĕ шучĕпе туянса пама пăхнă. Çавна валли 3 млн тенкĕне яхăн уйăрĕç. Апла пулсан ярапайкассисен малашне сцена çинче хăйсене кăтартма та, пултарулăх коллективĕсене хăйсем патĕнче йышăнма та лайăх майсем пулĕç.

**«Сывлăх сыхлавĕ» наци проекчĕ** шайĕнче регионăн «Развитие системы оказания первичной медико-санитарной помощи» регион проекчĕ тата Чăваш Республикин «Развитие здравоохранения» патшалăх программи пурнăçа кĕреççĕ.

Çынсен сывлăхне сыхласси юлашки вăхăтра çĕнĕ шая çĕкленнине пурте лайăх курса тăратпăр. Çаксем вĕсем пĕтĕмпе тенĕ пекех «Сывлăх сыхлавĕ» наци проекчĕ шайĕнче пулса пыраççĕ. Акă нумаях пулмасть Муркаш район больницин поликлиникин ача-пăча уйрăмĕнче юсав ĕçĕсем туса ирттернĕ, районта кăçалах çĕнĕ 4 ФАП çĕкленет, çывăх çулсенчех вара район больницин çĕнĕ поликлиникине те тума пуçăнмалла. Кунпа пĕрлех сиплев учрежденийĕсен пурлăхпа техника бази те пуянланса пырать.

Районта кăçал хута каякан фельдшерпа акушер пункчĕсенчен пĕри **(1-мĕш сăн ӳкерчĕкре)** шăпах ĕнтĕ Шурчара пулать. Çĕнĕ ФАП-а унчен пулнă фельдшерпа акушер пункчĕн вырăнĕнчех çĕклеççĕ. Вăл вара 1987 çулта тунă кивĕ çуртра вырнаçнă пулнă. Строительство ĕçĕсене 2021 çулхи кĕр кунĕсене вĕçлеме палăртаççĕ.

Фельдшерпа акушер пункчĕ 70,4 тăваткал метр лаптăк йышăнать. Вĕсенче çынсене йышăнмалли тата процедурăпа прививка кабинечĕсем, эмел тытса усрамалли пӳлĕм, кĕтмелли вырăн, санузел тата персонал валли хывăнса тăхăнмалли пӳлĕм пулаççĕ.

ФАП çуртне мĕнпур коммуникаципе çыхăнтараççĕ. Ăшă тата шыв парса тăмалли система та, канализаци те, электричество та, вентиляци те пулать. Пур пӳлĕме те СанПиН требованийĕсене тĕпе хурса хатĕрлеççĕ, хальхи медицина сĕтел-пуканĕпе тивĕçтереççĕ.

ФАП çывăхĕнчи территорие те хăтлăлатса илемлетме палăртнă. Йĕри-тавра хӳме пулать, çуран çӳрекенсем валли те, автомашинăпа пыма та çул сарса параççĕ.

Апла пулсан ноябрь уйăхĕнчех Шурча тата Кӳстерек ялĕсенче пурăнакансен çĕнĕ фельдшерпа акушер пунктĕнче сывлăха тĕрĕслеттерсе диагностика тухма, хăйсен сывлăхне сиплеме май пулĕ. Шурча ФАП-ĕ килти 275 хуçалăхра пурăнакан 427 çынна пăхса тăрĕ. Вăл шутран 87-шĕ – ачасемпе çул çитмен çамрăксем.

**«Хăрушлăхсăр тата пахалăхлă çулсем» наци проекчĕ** 2019 çултан тытăнса вăя кĕме тытăнчĕ пулин те, район Шупашкар агломерацине кĕнĕ май, çул-йĕрĕн калăпăшлă юсав ĕçĕсем районта 2017 çултанпах анлă сарăлчĕç. 2017 çулта район çулĕсене 1,7 километр, 2018 çулта 24 километр, 2019 çулта 9 километра яхăн, 2020 çулта 4,75 километр юсаса нормативлă шая çитерме май килчĕ. Кăçал ку ĕçсем Ярапайкасси ял тăрăхĕн территорийĕнчи «Волга» – Вăрăмой» çул çинче **(3-мĕш сăн ӳкерчĕкре)** малалла тăсăлаççĕ.

Кăçал кунта юсав ĕçĕсене 3,3 километр тăршшĕ участокра туса ирттерме палăртнă. Ĕçсем тытăннă та ĕнтĕ. Çул-йĕр юсав ĕçĕсене чикĕллĕ яваплăхлă «ТУСДОРСТРОЙ» общество строителĕсем пурнăçлаççĕ. Малтанхи вăхăтра юсавçăсем çула сарлакалатассипе, вак чул сарса çĕр сийне пусăрăнтарса хытарассипе ĕçлерĕç. Çак кунсенче асфальт сарас ĕçсем те пуçăнчĕç ĕнтĕ.

Юсав ĕçĕсем пахалăхлă пуласси, малашне кунти çул участокĕ чăннипех те нормативлă шайра пуласси иккĕлентермест. Мĕншĕн тесен ĕçсене пурнăçлакан строительство организацийĕн ку тĕлĕшри ĕç опычĕ те пĕчĕк мар. Çитменнине асăннă организаци пирĕн районшăн пĕлмен организаци те мар. 2019 çулта строительство организацийĕ «Исетерккĕ – Актай» автомобиль çулне юсанă чухне хăйне лайăх енчен кăтартса панăччĕ. Йӳçкасси ял тăрăхĕнче пурăнакансем паян куна çитсе те хăйсене тахçантанпах кĕтнĕ çавăн пек пахалăхлă çул туса панăшăн строительсене, кунпа пĕрлех патшалăха наци проекчĕшĕн тав сăмахĕ калаççĕ.

«ТУСДОРСТРОЙ» ООО юсав ĕçĕсене контрактпа пăхнă пекех августăн 30-мĕшĕ тĕлне вĕçлеме палăртать. Ку çапла пуласси иккĕлентермест те. Апла пулсан районта пахалăхлă çул татах хушăнĕ. Çитес çул вара наци проекчĕ шайĕнче çул-йĕр юсас ĕçсем районта малалла тăсăлĕç.

Çавна та палăртса хăвармалла. Асăннă çула юсама 18 млн тенкĕ уйăрма пăхнă. Ытларах пайне федераци бюджетĕнчен уйăраççĕ.



**Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.**